25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ДЕКАБРЬ
11
ЗРНЕКУН
287 (6222) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çĕнĕ çула çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илер

Тепĕр çирĕм кунтан пин те тăхăрçĕр хĕрĕх иккĕмĕш çул вĕçленет. Эпир çĕнĕ çул, пин те тăхăрçĕр хĕрĕх виççĕмĕш çул, умĕнче тăратпăр. Иртсе пыракан çулра пирĕн халăх, совет правительствипе большевиксен партийĕ ертсе пынипе, социализмлă строительствăн нумай участокĕсенче çĕнĕ çĕнтерÿсем турĕ. Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарни çинчен тунă докладра: иртнĕ çулта эпир, пур пек йывăрлăхсене çĕнтерсе, промышленноçăн никĕсне çĕршывăн хĕвелтухăç районĕсене куçартăмăр, акăнакан çĕр лаптăкне ÿстерсе пытăмăр тата фронтшăн ĕçлекен предприятисен ĕçне тĕпренех лайăхлатрăмăр, тесе палăртрĕ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура пирĕн фабрикăсемпе заводсем, пысăк тухăçлăхпа ĕçлесе, уйăхран уйăха ытларах продукци туса кăларасçĕ, пирĕн колхозсемпе совхозсем халăхпа Хĕрлĕ Çара — апат-çимĕç, промышленноçа — чĕртавар парса тăрасçĕ.

«Анчах иртнĕ çул мирлĕ строительство çулĕ кăна мар пулса тăрать, вăл унпа пĕрлех тата пирĕн мире юратакан çĕршыв çине ултавлăн та ирсĕррĕн тапăннă нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан отечественнăй вăрçă çулталăкĕ те пулса тăрать». (Сталин).

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар, нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç тĕнче тĕлĕнмелле паттăрлăхпа тата хăюллăхпа çапăçса çак çулхи вăрçă ĕçĕсен хĕллехи тапхăрĕнче тăшман Мускав çине тÿрех тапăннине сирсе ывăтрĕ, çуллахи тапхăрта тăшманăн Мускава аякран çавăрса илес тĕллевне пурнăçа кĕртме памарĕ. Юлашки тапхăрта, ноябрь уйăхĕн иккĕмĕш çурринчен вара, пирĕн войскăсем Сталинград патĕнче тата Центральнăй фронтра оборонăран наступление куçрĕç, тăшмана хаяррăн çапма пуçларĕç. Хĕрлĕ Çар чаçĕсен наступленийĕ малаллах пырать.

1942 çулта пирĕн Чăваш республикинчи промышленноçпа транспорт, коллективлă ялхуçалăхĕ, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăх хуçалăхĕ пекех, пысăк çитĕнÿсем турĕç. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешсе, чылай фабрикăсемпе заводсем хăйсен ĕç кĕвăртлăхĕсене, продукци туса кăларассине уйăхран уйăха ÿстерсе пычĕç. Канашри вагонсем юсакан завод çĕршывпа фронта вагонсем тата ытти продукци уйăхсерен ытларах парса тăрать. Вăрçă вăхăтĕнчи пек хăвăртлăхсемпе ĕçлесе, Н-ски завод, Вăрмарти спортинвентарь фабрики, Каранъялĕнчи «Труд», Шупашкарти «Красный мебельщик», Канашри «Авангард» артельсем тата ытти предприятисем те хăйсен çулталăкри производство программисене срокчен пĕрер-иккшер уйăх малтан тултарчĕç, планран иртттерсе сахал мар продукци туса кăларчĕç. Çак çулти ĕçсен планне республикăри апат-çимĕçпе вăрман промышленноçĕсем те срокчен тата ытлашшипех тултарчĕç. Асăннă промышленноçсен малта пыракан предприятийĕсем, Çĕмĕрлерипе Шупашкарти армансем, Канашри, Шупашкарти, Кувакинăри апат-çимĕç комбиначĕсем, Йĕпреçри, Вăрнарти тата Атăл лешъенчи лэспромхозсем халĕ те пысăк ăнăçлăхпа ĕçлеççĕ, хăйсен хисеплĕ вырăнĕнчех юлассишĕн кĕрешеççĕ. Ноябрьти социализмлă ăмăртăвăн лайăх итогĕсене пула, Челноков юлташ главнăй инженер пулса тăракан завод коллективĕ ВЦСПС-па пĕр халăх комиссариачĕн иккĕмĕш премине илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Иртсе пыракан çулталăкра пирĕн республикăн ялхуçалăхĕ те пысăк çитĕнÿсем турĕ. Ун çинчен ялхуçалăх работникĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕнчи пирĕн республикăн хăшпĕр итогĕсем тэ аван калаççĕ. СССР Çĕр-ĕç Халăх Комиссариачĕпе унăн Политуправленийĕ вăйлă тырпулшăн пыракан ăмăртăвăн малтанхи итогĕсене пăхса тухса, пирĕн республика тырпула уйхиртен пухса кĕртес тĕлĕшпе лайăх ĕçленине палăртрĕç; выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, унăн тухăçлăхнэ ÿстерес ĕçсен итогĕсем тăрăх, пирĕн республикăна Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăратрĕç. Çавăн пек кандидатра эпир çак ялхуçалăх çулĕнче трактор паркĕпе лайăх усă курнăшăн та тăратпăр.

Пирĕн республикăри ĕççыннисем тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетес, юратнă Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота пулăшас тĕлĕшпе, кăçалхи çул паллă ĕçсем турĕç. Вĕсем фронтри хĕрлĕ воинсем валли пиншер ăшă тумтирсемпе япаласем пухса тата çĕлесе пачĕç, шефа илнĕ чаçăн боецĕсэмпе командирĕсем патне вагонĕ-вагонĕпе парнесем ăсатрĕç. Республикăри рабочисенчен, колхозниксенчен тата служащисенчен пухнă укçапа икĕ бронепоэзд, самолетсен «Осоавиахим Чувашии» звенине, «Пионер Чувашии» танк тунă. Халĕ республикăри колхозниксемпе трактористсем танксен «Колхозник Чувашии», «Тракторист Чувашии» колоннисене тума хавхаланса укса пухаççĕ.

Пирĕн республика иртсе пыракан пин те тăхăрçĕр хĕрĕх иккĕмĕш çулта тунă ĕçсемпе çитĕнÿсем пĕчĕккĕ мар. Вĕсем совет халăхĕн тыла тĕреклетес. Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçĕн, тăшмана çĕнтерес кĕрешÿĕн пĕр пайĕ пулса тăраççĕ. Анчах та вĕсемпе эпир лăпланса ларма пултараймастпăр, умра çĕнĕ тэ ответлă ĕçсем, Сталин юлташ хăйĕн Октябрь уявĕнчи докладĕнче лартнă пысăк задачăсем тăраççĕ. Совет халăхĕпе Хĕрлĕ Сарăн çитес вăхăтра историллĕ виçĕ задачăна татса памалла: гитлерла государствăпа ăна хавхалантарса пыракансене, гитлерла сарпа унăн руководителĕсене пĕтерсе тăкмалла, «Европăри çĕнĕ йĕркене» çĕмĕрсе тăкмалла тата ăна тăвакансене ответ тыттармалла.

Сав задачăсене пĕтĕмпех пурнăçа кĕртес тесен, пирĕн Чăваш республикинчи ĕççыннисен, Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕçхалăхĕн пекех, промышленноçпа транспорта, социализмлă ялхуçалăхне малалла аталантарас, фронта пулăшассине вăйлатас тĕлĕшпе татах та тимлĕнрех, татах та тухăçлăнрах ĕçлес пулать.

Юлашки вăхăтра пирĕн хуласемпе ялсенче, предприятисемпе колхозсенче, чугунçул çинче, вăрмансенче — пур çĕрте те çĕнтерÿ хĕçпăшалне туптакан ĕçĕн çĕнĕ çĕкленĕвĕ пуçланчĕ. Тылри патриотсем фронтри воинсен кĕрешÿри çĕнтерĕвĕсем çине ĕçри çитĕнÿсемпе ответлеççĕ. «Тăшмана фронтра вутпа сунтарар, тылра ĕçпе çапар!» — çакăн пек халĕ Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕн кĕрешÿрипе ĕçри пĕрлĕхлĕ лозунгĕ. Фронтра пуçланнă наступлени тылра та пырать. Сакă вăл пирĕн тылри работниксен Хĕрлĕ Çар воинĕсенчен пĕр сын пек пĕрлĕхлĕ, хурçă пек çирĕп дисциплинăллă пулма, темле йывăр самантра та задачăна пурнăçа кĕртме вĕренмеллине пĕлтерет. Вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçлес тесен, производство планĕсене çитĕ тĕплĕн тăвас пулать, ĕçре пуçарулăхпа тавçарулăх кăтартас пулать, йышăннă плана мĕн пулсан та пурнăça кĕртес пулать, пуçланă ĕçе вĕçне çитерес пулать.

Пирĕн республикăри малта пыракан предприятисэм чăннипех те вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçлеççĕ. Промышленность наркомачĕсен, парти организацийĕсен задачи — малта пыракан предприятисен ĕç опытне мĕнпур промышленноçа сарасси, унпа кашни фабрика, Кашни завод коллективне паллаштарасси. Пирĕн промышленноçпа предприяти коллективĕсен халĕ çак çулти ĕççэн планне пĕтĕмпех тултарассишĕн, çĕршывпа фронта планран ирттерсе продукци парассишĕн, çĕнĕ çула производствăри çĕнĕ çитĕнÿсемпе паллă тăвассишĕн кĕрешмелле. 1943 çулччен юлнă вăхăтпа пĕлсе тата туллин усă курмалла, ĕçри пĕр минутăна та сая ямалла мар.

Республикăри ялхуçалăх работникĕсен, партипе совэт организацийĕсен задачи — авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕçсене çитес вăхăтрах вĕçлесси, çак ĕçсен хăвăртлăхĕсене ÿстересси пулать. Çав вăхăтрах колхозсемпэ совхозсен килес çулхи тырпулăн никĕсне хывма — 1943 çулти çуракине ирттерме халех тата тĕплĕн хатĕрленмелле.

Умра—çĕнĕ, пин те тăхăрçĕр хĕрĕх виççĕмĕш çул. Рабочисемпе работницăсэм, колхозниксемпе колхозницăсем тата служащисем, çĕнĕ çула çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илер, промышленноçпа транспортри, социализмлă ялхуçалăхĕнчи ĕçсене татах та лайăхлатар, фронта пулăшассине вăйлатар!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 9-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Декабрĕн 9-мĕшĕнчэ пирĕн войскăсем **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

Декабрĕн 8-мĕшĕнче Сталинград районĕнче противникăн 24 транспортнăй самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Декабрĕн 8-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 25 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 6 батарейине пусарса лартнă, 2 поезда çĕмĕрнĕ. Противникăн пехотине пĕр батальон таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн чаçсем, вак группăсене уйăрăлса кĕрешсе, нимĕçсен 13 дзотне ишĕлтернĕ е тытса илнĕ, гитлеровецсене пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă. Хулан вăтаçĕрти пайĕнче пирĕн боецсем противника темиçе пысăк çуртран хăваласа кăларнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем активлăн çапăçнă. Противникăн контратакисене сире-сире ярса, вĕсем кăшт малалла куçнă. Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕç окопĕсен пĕрремĕш линине кĕрсе кайнă та опорнăй пункта хÿтĕлекен гитлеровецсене пĕтерсе тăкассишĕн çапăçаççĕ. Тепĕр участокра противникăн пехотипе танкĕсен контратакине сирсе янă. Пирĕн боецсем тăшманăн 6 танкне çунтара янă, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă, уйрăм участоксенче противникăн контратакисене сирсе тăнă. Пĕр кун хушшинче 500 ытла нимĕç салтакĕпе офицерне, 6 орудие, 15 пулемета, 60 автомашинăна тата противникăн темиçе складне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Великие Луки районĕнче Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕçсене халăх пурăнакан пĕр пунктран хĕссе кăларнă, артиллерин 105 миллиметрлă батарейине тата нимĕçсен 3 танкне тытса илнĕ. Нимĕçсен 246 пехотнăй дивизийĕнчен тыткăна илнĕ салтаксем каланă тăрăх, çав дивизире юлашки çапăçусенче 6.000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем вырăнти çапăçусем туса пынă тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Юлашки 5 кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 12 танкнэ персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 8 пулеметнăй точкăна тата минометсен 3 батарейине пĕтерсе тăкнă. 19 пулемет, 100 винтовка ытла, 2 противотанковăй пăшал тата боеприпассем тытса илнĕ.

* * *

Украинăри партизансен отрячĕ пĕр эрне хушшинчи çапăçусенче 150 гитлеровеца вĕлернĕ тата 2 бронемашинăна пĕтерсе тăкнă. Унсăр пуçне, совет патриочĕсем телефон линине 100 метр тăршшĕнчэ пăсса хунă тата чугунçул çинчи пĕр кĕпере сирпĕнтерсе янă.

* * *

Тыткăна лекнĕ полковник, румынсен 6-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 27-мĕш полкăн командирĕ Иосиф Чабану çапла каласа панă: «Темиçе кун хушшинче пирĕн дивизире çын йышĕнчен 25 процэнт пĕтрĕ. Манăн полкра икĕ кун хушшинче 400 çынтан кая мар стройран тухрĕç. Çакна палăртмалла: нимĕçсем, хăйсен никам çĕнтерейменлĕхĕпе мухтанаканскерсем, пиртен ытларах çухату тÿсрĕç. Сăмахран, пиртен сылтăмра çапăçнă нимĕç дивизине пĕтĕмпех аркатса тăкнă. Унăн салтакăн тăрса юлнă юлашкийĕсем вара хăйсэн офицерĕсемпе пĕрле тыткăна парăннă.

Германи командованийĕ çине тăрса сĕннипе халь кашни румын дивизийĕнче пĕр нимĕç офицерĕ пур, вăл дивизи командирĕн — румын генералĕн ĕçĕсене контрольлесе кăтартусем парса тăрать. Çакă румын офицерĕсэн наци тивĕçлĕхне кÿрентерет, вĕсене хытă тарăхтарать».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Калинин облаçĕнчи Кулагино тата Прокшино ялĕсене тустарса çаратса пĕтернĕ. Бандитсем хресченсене нимĕн юлмиччэн çаратса тухнă, вĕсенчен пĕтĕм продовольствие, мĕнпур выльăх-чĕрлĕхе, çавăн пекех тата чи хаклă япаласене туртса илнĕ. Фашистла ирсĕрсем арçынсене пурне те персэ вĕлернĕ; хĕрарăмсене тыла ирĕксĕрле ĕç ĕçлеме хăваласа кайнă.

Декабрĕн 10-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Декабрĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Сталинградăн çурçĕр пайĕнче пирĕн подразделенисем, противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе ярса, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Хулан кăнтăр хĕрринче Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕçсен оборони ăшне савăлланса кĕрсе кайнă та вĕсен окопĕсене йышăнса илнĕ. Противникăн 200 çити салтакĕпе офицерĕ вилнĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене тĕреклетнĕ, уйрăм участоксенче противникпа активлăн çапăçнă. Н-ски часть нимĕçсене халăх пурăнакан пунктран хăваласа кăларса, противникăн 400 çити салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. 24 пулемет, грузсем тиенĕ 80 лав, 15 автомашина, 4 радиостанци, 5 оруди тата 100 ещĕк снаряд тытса илнĕ. Тепĕр участокра противникăн пехотипе танкĕсен контратакине сирсе янă; вĕсем ĕнер пирĕн боецсем йышăнса илнĕ позицисене каялла тытса илесшĕн пулнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен темиçе çĕр вилли тата персе çĕмĕрнĕ 8 танкĕ выртса юлнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн артиллери противникăн пĕр çĕре пухăнса тăнă войскисене саланаса янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. 15 автомашина çĕмĕрнĕ, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă тата нимĕçсен 3 танкне пĕтерсе тăкнă. Старши лейтенант Буславский ертсе пыракан танкистсем чаплă ĕç туни çинчен хыпар илнĕ. Çак танкăн экипажĕ тăшманпа çапăçса нимĕçсен 8 танкне вут тивретнĕ, 6 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Ржевран хĕвеланăçнерехри районра Н-ски чаçăн боецĕсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен 600 çити салталтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра пирĕн подраздедени малалла куçса пырса 19 дзотпа блиндажа тата нимĕç пехотине виçĕ рота таран пĕтерсе тăкнă. Гварди красноармеецĕ Михайлов юлташ противникăн контратакине сирсе янă чухне противотанковăй пăшалпа персе нимĕçсен 2 танкне çĕмĕрнĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн бронебойщиксем противникăн атакине сирсе ярса, нимĕçсен 11 танкне персе çĕмĕрнĕ. Бронебойщик Гесошвили лейтенант тата Мершаев красноармеец кашнийĕ 3-шер танк пĕтерсе тăкнă. Юзбоев тата Зейпалов боецсем противникăн 2 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Калинин облаçĕнчи партизансен отрячĕ пĕр ялта тăракан нимĕç гарнизонне тапăннă. Партизансем 24 гитлеровеца вĕлернĕ, 5 автомашинăна пĕтерсе тăкнă, пĕр кĕпере сирпĕнтерсе янă тата телефонпа телеграф çыхăнăвне пăсса хунă. Çав отрядри партизансем противникăн поездне крушени тунă. Пĕр паровоз тата автомашинăсем тиенĕ 12 платформа çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Ржев районĕнче нимĕçсен 215-мĕш дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ лейтенант Ганс Риес çапла каласа панă: «Вырăссем хĕснине пула 195-мĕш полк хăйĕн позицийĕсене пăрахса хăварнă пулнă. Дивизи командованийĕ 215-мĕш полкăн 2-мĕш батальонне хуть те мĕнле çухатусем тÿссе те пулин çав позицисене каялла тытса илме хушнă. Ирхипе ирех эпир контратака турăмăр. Вырăссем пулеметсемпе тата минометсемпе чăтма çук вăйлăн пеме тытăнчĕç. Пĕр сехет хушшинчех пирĕн батальонри салтаксенчен çурри вилсе выртрĕ. Пирĕн çĕр çине выртма тиврĕ, темиçе сехет хушши эпир юр çинче пуçа çĕклемесĕр выртрăмăр. Сасартăк вăрмантан вырăс танкĕсем тухрĕç. Салтаксемпе офицерсем тарма тытăнчĕç, анчах та танксемпе пехотăн вут-çулăмĕ пире пур-пĕрех çитсе ăшаларĕ. Пирĕн батальона пĕтĕмпех аркатса тăкрĕç».

* * *

Хĕрлĕ Çарăн командирĕсемпе боецĕсен ушкăнĕ нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тыткăна лекнĕ совет çыннисене тискеррĕн асаплантарни çинчен акт çырнă. Актра çапла каланă: «Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре каялла чакакан противника хăваласа пынă чухне эпир гитлерла бандитсем асаплантарса вĕлернĕ 5 красноармеецăн виллине тупрăмăр. Нимĕçсем тыткăна лекнĕ икĕ боецăн ар органĕсене касса пăрахнă. Ытти красноармеецсен пырĕсене касса татнă». Акта майор Петров, санинструктор Борсов, кĕçĕн сержант Заворзен тата Королевпа Вечерков красноармеецсем алă пуснă.

Танксен хăватлă колоннисене тăватпăр

25.482 тенкĕ пухнă

ЕТĔРНЕ, декабрĕн 10-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Машинно-тракторнăй станци коллективĕ танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума паянхи кун тĕлне 25.482 тенкĕ пухса банка хывнă. Ку ĕçе уйрăмăнах тракторсен 2-мĕш, 9-мĕш тата 3-мĕш бригадисем ăнăçлăн ирттерчĕç. 2-мĕш трактор бригади танксен колоннине тума 7.000 тенкĕ, 9-мĕш бригада—5.070 тенкĕ укçа пухрĕç. Иккĕмĕш бригадăн бригадирĕ В. Токсубаев çав ĕç валли 1.500 тенкĕ, 9-мĕш бригадăн бригадирĕ Рябов юлташ 1.070 тенкĕ укçа пачĕç. Вĕсен примерне комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем йышăнса илчĕç. 9-мĕш трактор бригадин учетчици комсомолка З. Кошкина танксен колоннине тума 900 тенкĕ, иккĕмĕш бригадăра плугарь пулса ĕçленĕ комсомолка Л. Цыганова 700 тенкĕ, тракторист В. Антонов—500 тенкĕ пачĕç. Танксен колоннине тума укçа пухас ĕç малалла та пулса пырать.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, МТС коллективĕ, паян тракторсене юсас ĕçе хăвăртлатас тĕлĕшпе фронтри пек ĕçлемелли эрнене хутшăнса, декабрĕн 10-мĕшĕпе 18-мĕшĕ хушшинче 10 трактора юсаса кăларма обязательство илчĕ.

А. ТОКСУБАЕВА,
МТС политотдел начальникĕн комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕ.

Танксен колоннисене тума вуншар пин тенкĕ хываççĕ

КУСЛАВККА, декабрĕн 10-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Çулпуçăн çулăмлă сăмахĕсемпе хавхаланнă районри ĕççыннисем хăйсем перекетлесе хăварнă укçатенкĕне танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» ятлă колоннисене тума хываççĕ. Декабрĕн 8-мĕшĕ тĕлне государство банкĕн районри отделенине танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 190.000 тенкĕ, «Тракторист Чувашии» колоннине тума 14.000 тенкĕ хывнă. Кунерти Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем танксен колоннине тума 50.000 тенкĕ пухнă. Паянхи кун тĕлне вĕсем 28.000 тенкĕ укçан хывнă. Çавăн пекех Чашламари «Ударник» колхоз членĕсем 10.000 тенкĕ, «III Интернационал» колхоз членĕсем 10.000 тенкĕ, «Правда» колхоз членĕсем 12.000 тенкĕ укçа пухнă.

И. ЛУКОЯНОВ.
ВКП(б) райкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ.

Вĕренекенсем фронта пулăшаççĕ

КАЛИНИНО. Педагогика училищинче вĕренекенсем фронта пулăшассишĕн çине тăрса тăрăшаççĕ. Сталин юлташăн çĕнтерÿ тума чĕнекен сăмахĕсемпе хавхаланса, III-мĕш «А» класра вĕренекенсем танксен «Народный учитель» ятлă колоннине тума 800 тенкĕ, II-мĕш «В» класра вĕренекенсем—300 тенкĕ укçа пухрĕç. Комсомолецсем В. Карпов, И. Иванов çак ĕç валли 50-шар тенкĕ пачĕç. Çавăн пекех ытти вĕренекенсем те 50—30-шар тенкĕ пачĕç.

Б. ФИЛИППОВ.

Совет боецĕсене—çĕнĕ çул парнисем

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, (**Хамăр корр.**). Янмурзино колхозĕн членĕсем, Хĕрлĕ Çарăн Сталинград патĕнче тата Центральнăй фронтра тунă çитĕнĕвĕсемпе хавхаланса, 1942 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕç. Тырпула кĕске вăхăтра пуçтарса кĕртсе, кĕске вăхăт хушшинчех çапса пĕтерчĕç.

Колхозниксем колхозра хастарлăн ĕçленипе пĕрлех Хĕрлĕ Çарăн боецĕсене те вăйлăн пулăшаççĕ. Колхозниксем хăйсем ĕçлесе тунă тупăшран Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли çĕнĕ çул ячĕпе 25 килограмм типĕтнĕ купăста, 20 килограмм аш, 5 килограмм çу, 3 килограмм пыл, 192 килограмм тулă çăнăхĕнчен пĕçернĕ сухари, 5 килограмм махорка, 5 литр эрех ярса пама хатĕрленĕ. Колхозниксем тата сăмса тутрисем, енчĕксем хатĕрлесе параççĕ.

Çулталăкри планран ирттерсе 610 тонна çăнăх авăртнă

Шупашкарти механизациленĕ арман 1942 çулхи ĕçсен планне 11 уйăх хушшинчех 107,3 процент тултарнă. Арман çулталăкри планран ирттерсе 610 тонна çăнăх авăртса кăларнă. Декабрьте планран ирттерсе татах та çĕршер тонна продукци парать. Çак çитĕнĕве арман коллективĕ апат-çимĕç промышленноçĕн работникĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне хутшăнса турĕ.

Арманта ĕçлекенсем производство планне ирттерсе тултарнипе пĕрлех вăрçă вăхăтĕнчи çирĕп законшăн — хуçалăхри типтерлĕхпе перекетлĕхшĕн — кĕрешеççĕ. 1942 çул тĕлне арман 81 пин тенкĕ ытлашши тăкакланă. Çав тăкака халĕ пĕтĕмпех сапланă. Вунпĕр уйăх хушшинче производствăра 34 тонна çăнăх перекетлесе хăварнă. Таварăн хăйне ларакан хакне кашни тонна çăнăх пуçне 1 тенкĕ те 83 пус йÿнетнĕ.

Кăçалхи кĕркуннеччен Шупашкарта пĕр арман çеç ĕçленĕ. Вăл уйăхне вăтамран 750 тонна çăнăх авăртнă. Халĕ Шупашкарта икĕ арман ĕçлет. Вĕсем ноябрьте 1.240 тонна çăнăх авăртнă.

Армансенче ĕçлекенсем кашниех социализмлă ăмăртăва хутшăннă. Ăмăртури чи лайăх тĕслĕхсене Мартяшов, Иванов, Жданов тата Поляков мельниксем кăтартаççĕ. Вĕсем хăйсен кулленхи нормисене тăтăшах ирттерсе тултараççĕ. Филипповăпа Сергеева работницăсем арманта «арçын ĕçĕсене» тăваççĕ. Апла пулин те вĕсен ĕç тухăçлăхĕсем нормăран чылай пысăк.

Перекетлĕхшĕн кĕрешнин малтанхи утăмĕсем

ÇĔМĔРЛЕ, декабрĕн 10-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Мартынов юлташ директор пулса ертсе пыракан комбинатри рабочисемпе инженерла-техникла работниксем чĕртавара, топливăна тата электроэнергие прекетлес тĕлĕшпе чылай ĕçсем турĕç. Комбинатра халиччен 2 трансформатор (пĕри — оборудованисене вăй парас тĕлĕшпе, тепри—пÿлĕмсене çутатас тĕлĕшпе) ĕçлетчĕ. Вĕсен вăйĕсем кашнинех 240-шер киловатт-сехет чухлĕ. Халĕ çак икĕ трансформатортан пĕрине çеç ĕçлеттеретпĕр. Капла туни электроэнергие чылай перекетлеме май парать.

Цехсенче ку таранччен станоксене пушăлла çавăрттарса электроэнергине усăсăр тăкакланă. Ятарласа тунă комисси электричество вăйĕпе цехсенче мĕнле тата мĕн таран усă курнине тĕрĕслесе тухрĕ. Çавăн хыççăн, май пур çĕрте, вăйлă моторсене вăйсăртараххисемпе улăштарнă, электричество лампимсен хисепне сахаллатнă. Çакăн пек мероприятисене комбинатра çеç мар, рабочисем пурăнакан поселокра та туса ирттернĕ. Унта электричество çуттипе нормăран ирттерсе усă курнине пĕтернĕ, хăшпĕр хваттерсенче электроплитасем тытнине чарнă т. ыт. те.

Çак мероприятисем пурĕ пĕрле ноябрь уйăхĕнче 13.875 киловатт-сехет электроэнерги перекетлеме пулăшрĕç. Вăл шутран 8.730 киловатт-сехетне рабочисем пурăнакан поселокра перекетленĕ.

Электроэнергие перекетлес тĕлĕшпе инженер-электрик Бабин, электромонтаж группин заведующийĕ К. Поцелуев, электромонтерсем П. Гогин тата И. Кровяков юлташсем уйрăмах тăрăшса ĕçленине палăртмалла. Вĕсем çак ĕçре тунă хăшпĕр ÿсĕмсене çирĕплетсе татах та пысăкрах ÿсĕмсем тăвассишĕн кĕрешеççĕ.

К. ДМИТРИЕВ,
Комбинатри завком председателĕ.

Оборона фондне

Мăн Явăшри (Калинински район) туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем Сталин юлташăн докладне сÿтсе явнă хыççăн оборона фондне 300 тенкĕ ытла укçа хыврĕç. Вăл шутран В. Кошкин, Г. Васильев, Чумакова вĕренекенсем 20-шер тенкĕ пачĕç.

И. ФЕДИНГИН.

Хуласенчи рабочисем валли

КАЛИНИНО. Районри колхозсенче заводсенчи рабочисене государство хакĕпе тĕрлĕрен пахча-çимĕç сутасси сарăлсах пырать. Çак кунсенчэ Услапари «Броневик» колхоз колхозникĕсем республикăри пĕр заводра ĕçлекен рабочисене 8 тонна тĕрлĕрен пахча-çимĕç, тепĕр заводри рабочисене государство хакĕпе 1 тонна купăста, 2 тонна çĕрулми сутрĕç.

В. ШОРНИКОВ.

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕнче

ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ Канашри вагонсем юсакан заводри çамрăксем МТС-семпе колхозсене ялхуçалăх машинисемпе тракторсене юсас ĕçре пулăшма чĕнсе çырнине ырланă. (Çыру «Чăваш Коммуни» хаçатăн кăçалхи декабрĕн 8-мĕшĕнчи номерĕнче пичетленнĕ).

ВЛКСМ горкомĕсемпе райкомĕсене, промышленноçпа транспорт предприятийĕсенчи, чугунçул училищисенчи, ФЗО шкулĕсемпе комсомол организацийĕсене çак çырăва анлăн сÿтсе-явма, çавна май унти комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксене колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисенчи ялхуçалăх машинисемпе тракторсене юсас ĕçе мобилизацилеме, тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсама кирлĕ машина пайĕсемпе инструментсене вырăнтах çĕнĕрен тăвассине, киввисене юсассине организацилеме хушнă. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсама МТС-семпе колхозсене çамрăксен ремонтнăй бригадисене яма, МТС-семпе колхозсем çумĕнче çамрăксенчен тимĕрçĕсем хатĕрлекен курссене организацилеме хушнă.

Вагонсем юсакан заводри çамраксен пуçарăвĕ сарăлса пырать

КАНАШ. («Чăваш Коммуни» корр.). Вагонсем юсакан заводри комсомолецсемпе çамрăксем тăван çĕршыври çамрăк рабочисене колхозсемпе МТС-сене çитес çураки валли ялхуçалăх машинисене юсама пулăшма чĕнсе каланине Канашри ялхуçалăх механизацийĕн шкулĕнчи çамрăксем пысăк активлăхпа сÿтсе-яврĕç.

— Вагонсем юсакан заводри çамрăксем,—терĕ çамрăксен пухăвĕнче ВЛКСМ пуçламĕш организацин секретарĕ Соболь юлташ,—патриотизмлă пысăк ĕç пуçарчĕç. Колхозлă яла çитес çуракине хатĕрленме пулăшма пирĕн те пысăк майсем пур. Пирĕн шкулăн картишĕпе склачĕсенче ялхуçалăх машинисен кивĕ деталĕсемпе инструментсем ăçта килчĕ унта выртнине курма пулать. Вĕсене пирĕн чăн-чăн хуçасем пек пулса пухса юсамалла.

Пуху вагонсем юсакан заводри çамрăксен пуçарăвне ырларĕ. Ялхуçалăх механизацийĕн шкулĕнче вĕренекенсем республикăри колхозсен ялхуçалăх машинисене юсама 1.500 тĕрлĕ машина пайĕсем, республикăри МТС-сем валли 400 штука ытла трактор пайĕсемпе инструментсем юсаса, хатĕрлесе пама пулчĕç. Кунсăр пуçне вĕсем Канаш МТС-ĕнчи трактор бригадисем валли инструментсен 11 комплектне пухса пама обязательство илчĕç.

ВЛКСМ ретне 14 çулти çамрăксене те илеççĕ

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ 14 çулти çамрăксене комсомол ретне илме ирĕк паракан постановлени йышăннă.

ВЛКСМ Центральный комитечĕн постановленийĕ комсомол организацийĕсене çав çулти çамрăксене вĕрентсе çитĕнтерессишĕн, вĕсен политикăллă тата культурăллă пĕлĕвĕсене ÿстерессишĕн тăрăшса ĕçлеме хушать.

Вăрçă кунĕсенче çамрăксем тăван çĕршывăн пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăракан пулчĕç. Халĕ çамрăксенчен чылайĕшĕ промышленноçпа ялхуçалăхĕнче ĕçлеççĕ, вĕсем хăйсен ĕçĕшĕн çĕршыв умĕнче ответлăха вăйпитти çынсемпе пĕртанах туйса тăракан пулчĕç. Çавăнпа, паллах ĕнтĕ, халĕ çамрăксем çине халиччен пек пăхма пăрахмалла ĕнтĕ, производствăра ĕçлекен çамрăксем хушшинче комсомол организацийĕсен воспитани ĕçне тимлĕн туса пымалла.

14 çулти çамрăксене комсомол ретне илмелле туни—комсомолăн çамрăксем хушшинчи влиянине татах анлăлатать, комсомол речĕсене ÿстерме пулăшать, колхозсенче, ремесленнăй училищĕсемпе ФЗО шкулĕсенче, туллимар вăтам шкулсенче комсомолăн организацийĕсене çĕнĕрен организацилеме май туса парать.

Ку ĕçре комсомол организацийĕсене парти организацийĕсем пысăк пулăшу пама тивĕç. Вĕсен задачи—комсомол организацийĕсене çамрăксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе тĕрĕс йĕркелеме, çамрăксене производствăра ĕçлеме, вĕсен квалификацине ÿстерме тата пурнăçпа-йăла условийĕсене лайăхлатма пулăшмалла.

Çамрăксене йĕлтĕрпе çÿреме вĕрентетпĕр

ВĂРМАР, декабрĕн 10-мĕшĕ. (Телефонпа). Йĕлтĕрçĕ-боецсене хатĕрлес ĕçе эпир тăван çĕршыв умĕнчи хамăрăн пирвайхи тивĕçлĕх вырăнне шутлатпăр. Районри шкулсемпе всевобуч пункчĕсенче халĕ çамрăксене йĕлтĕрпе çÿреме вĕрентетпĕр. Декабрĕн 9-мĕшĕ тĕлне йĕлтĕрçĕсем хатĕрлеме районра 46 команда организациленĕ, вĕсенче 600 çамрăк ытла. Комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе районра 500 йĕлтĕр ытла юсаса хатĕрленĕ, 5 çĕрте — Урнарта, Пысăк Енкассинче, Кавалта, Шăхальре тата райцентрта йĕлтĕр базисем тунă. Райцентрти йĕлтĕрсен базинче 240 мăшăр йĕлтĕр ытла.

Йĕлтĕрçĕ-боецсене хатĕрлес ĕçе эпир «Кашни комсомолецăн йĕлтĕр пултăр» текен лозунгпа туса пыратпăр. Юлашки икĕ эрне хушшинче Кавалти çамрăксем (ВЛКСМ организацин секретарĕ Табакова юлташ) хăйсем 6 мăшăр, Кивĕ Вăрмарти çамрăксем — 3 мăшăр йĕлтĕр турĕç. Кивĕ Вăрмарта йĕлтĕрçĕсем хатĕрлеме 5 команда организациленĕ. Унта 50 çамрăк ытла хутшăннă, вĕсен кашнийĕнех хăйсен йĕлтĕрсем пур. Ялти çамрăксене йĕлтĕрпе çÿреме ВЛКСМ организацийĕн секретарĕ Семенов юлташ вĕрентет. Вăл нумай пулмасть йĕлтĕр спорчĕн инструкторĕ пулма вĕренсе тухнă.

Йĕлтĕр çине тăма пултаракан кашни çынна йĕлтĕрпе çÿреме вĕрентер! — çакăн пек пирĕн ĕçри лозунг.

И. ЗАЛЕВСКИЙ,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

ПАТТĂР ПУЛНĂ ПĔЛТĔР, ПАТТĂРТАРАХ — КĂÇАЛ. | ХĔРЛĔ ÇАРШĂН ЙĔЛТĔР ВĂЛ — КИРЛĔ ХĔÇПĂШАЛ.

Коммунистка ертсе пыракан ферма

КУКĔÇ. Пушаева юлташ çулталăк ытла ĕнтĕ Самукассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз фермисен заведующийĕ пулса ĕçлет. Фермăсенче çирĕп йĕрке тăвассишĕн, выльăх-чĕрлĕхĕн продуктивноçне ÿстерессишĕн тимлĕн тăрăшать. Кăçал ВКП(б) кандидатне кĕнĕ хыççăн М. Пушаева юлташ татах та лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕ.

Колхоз пур йышши выльăхсем енĕпе те государство планне тултарнă. Государствăна сĕт, аш-какай июль уйăхĕнчех парса татнă, «Шăнкас» тата «Победа» колхозсене сĕт парса пулăшнă. Государствăна аш-какай 1943 çулшăн та 1.667 килограмм панă.

Выльăх-чĕрлĕх продукцине тĕрĕс шута илсе пыраççĕ. Ĕнесем мĕн чухлĕ сĕт пани кашни кунах паллă. Доярккăсем хăйсем çумне çирĕплетсе панă ĕнесене çеç сăваççĕ. Планпа кăçал кашни фуражлă ĕнерен 1.100 литр сĕт суса илмелле пулнă. Ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 1.075 литр суса илнĕ. Ĕнесене халĕ те пÿрне те сăваççĕ.

Кăçалччен колхозăн выльăхсене усрама витесем çителĕклĕ пулман. Кăçал колхоз пысăк вите туса лартрĕ. Унта 35 пуç сысна, 60 пуç сурăх, 130 пуç чăх-чĕп вырнаçтарса усрама пулать. Ĕнесем тата сурăхсем валли çĕнĕ кормушкăсем тунă. Халь тата çамрăк пăрусене усрамалли вите тăваççĕ. Кăçал колхозра строительсен 6 çынран тăракан бригади витесем тунă çĕрте çăвĕпех ĕçленĕ.

Выльăхсем айĕнчи тислĕке кулленех кăларса, таса улăмпа улăштарса тăраççĕ. Выльăх-чĕрлĕх валли апат-çимĕç çителĕклĕ хатĕрленĕ.

Малтанхи вăхăтра фермăсенче ĕçлекенсем час-часах улшăннă. Ку вара ĕçе пысăк сиенсĕр пуçне нимĕн те кÿмен. Халь Пушаева юлташ ферма работникĕсене нумай вăхăта çирĕплетме шутлать. Доярккăсем пулса Федора Владимирова тата Серафима Кузьмина комсомолкăсем ĕçлеççĕ. Ксения Романовăпа Анна Николаева юлташсем — скотницăсем, Людьмила Петрова — свинарка, Мария Филиппова чăх-чĕпсене пăхать. Вĕсем пурте хăйсен ĕçĕшĕн тăрăшаççĕ. Анчах вĕсем нихăшĕ те курссенче вĕренсе тухман. Зоотехника правилисене çителĕклĕ пĕлмеççĕ. Райçĕрĕç пайĕнчен те ку тĕлĕшпе пулăшу пани пулман. Халь Пушаева юлташ зоотехника правилисене хăйсем тĕллĕн вĕренме тытăнма шутлать.

Пушаева юлташ фермăсен ĕçне çирĕп контрольлесе тăрать. Вăл кăнтăрла та, çĕрле те, вăхăта пăхмасăр ĕçлет.

Çамрăк коммунистка парторганизацин порученийĕсене те вăхăтра пурнăçласа пырать. Апа Хĕрлĕ Çар валли ăшă япаласем пухас ĕçе организацилеме хушнă. Çак вăхăтра 20 тир, 10 килограмм çăм, алшиш-чăлхасем пухнă.

Т. ЛОГИНОВ.

Аш-какай параççĕ

ШĂХАСАН. «Ямурза» колхоз членĕсем хăйсен хуçалăхĕнчен государствăна 1943 çулшăн аш-какай параççĕ. Паянхи куна колхозниксем государствăна пурĕ 167 килограмм какай панă. Н. Исаев, С. Андреев, М. Андреев, А. Иванов, Ф. Иванов, П. Муков колхозниксем государствăна 1943 çулшăн 40—20-шер килограмм какай панă.

Ытти колхозниксем те государствăна какай срокчен парса татма тăрăшаççĕ.

В. ЯКОВЛЕВ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

СТАЛИНГРАД ХĔРРИНЧИ УРАМСЕНЧИ ÇАПĂÇУСЕМ. Ÿкерчĕк çинче: Пирĕн автоматчиксем Сталинград хĕрринчи поселок кварталĕсенчен нимĕçсене каялла хĕссе кăлараççĕ.
В. ОРЛЯНКИНПА З. РОГОЗОВСКИЙ кино-операторсен фотоÿкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, декабрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем активлăн çапăçса пăртак малалла куçнă.

Укрепленисен вăйлă системипе усă курса нимĕçсем питĕ хытă хирĕç тăраççĕ. Пĕр участокра противник 6 хут контратака тунă. Тăшманăн 2 батальон пехоти танксем пулăшса пынипе пирĕн пĕр чаçăн рубежне тытса илме хăтланнă, анчах та вĕсене пысăк çухатусем тÿстерсе каялла сирсе янă. Тепĕр тĕлте пирĕн подразделенин позицийĕсене нимĕçсен пĕр батальон пехоти атакăланă, ăна та танксен пысăк групи пулăшса пынă. Совет воинĕсем хăюллăн çапăçма тытăнса, нимĕçсене каялла сирсе янă, унтан противникăн позицийĕсене хăйсем ăнăçлăн атакăланă. Копылов подразделенинчи автоматчиксен групи, танксем çине ларса, нимĕçсен çапăçу речĕсем ăшне кĕрсе кайнă. Автоматчиксем, тăшманăн речĕсем хушшинче тăрса, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене çывăхран тĕллесе пере-пере вĕлернĕ. Автоматчиксен взвочĕн командирĕ Файзулин тата отделени командирĕ Ваншин кашнийĕ вуншар гитлеровеца вĕлернĕ.

Тăшманăн пĕр ротăна çити пехоти тата 10 танкĕ ытла Скоробогатов лейтенантăн подразделенийĕ патне вăркăннă. Совет боецĕсем тăшмана хастарлăн хирĕç тăнă. Кошубин сержант тăшманăн икĕ машинине противотанковăй пăшалпа персе çĕмĕрнĕ. Çав подразделенин ытти боецĕсем, пăшалсемпе тата пулеметсемпе вăйлăн персе, малтан нимĕçсене çĕр çумне лаплаттарса хунă, унтан каялла чакарнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 6 çĕмрĕк танкĕ ларса юлнă. Скариковпа Николаенко красноармеецсем, тăшманăн çав çĕмрĕк танкĕсем хыçĕнчен персе, темиçе минута хушшинчех 20 фашиста ытла вĕлернĕ.

Противникăн çав участокра çĕнĕрен тунă темиçе контратаки те ăнăçман.

Пирĕн чаçсем наступлениллĕ çапăçусем туса пырса, противникăн çапăçу речĕсем хушшине кĕрсе кайнă та унăн окопĕсен малти линине йышăнса илнĕ. Халĕ унта тăшманăн опорнăй пунктĕнчи гарнизонне пĕтерсе хурас тесе çапăçаççĕ. Нимĕçсем тăтăшах контратакăсем тăваççĕ, совет войскисене малалла кайма чарасшăн. Противник, тÿрех пырса çапни ăнăçассăрккине курса, час-часах хăйĕн тактикине улăштарать: вăл хăйĕн вăйĕсене хуллен пухса пырать, вăрттăн кĕрешме тăрăшать, пирĕн фронтăн вăйсăртарах вырăнĕсене шырать. Совет разведчикĕсем тăшмана сăнаса тăрса унăн маневрĕсене вăхăтра пĕлеççĕ.

Сафонов ертсе пыракан подразделени, тăшманăн çавăн пек вăрттăн хатĕрлесе тунă контратакине сирсе ярса, хăй наступлени тунă; вăл тăшманăн оборонине çĕнтерсе пĕр паха вырăна йышăнса илнĕ. Çав çапăçура Демин сержантăн оруди расчечĕ уйрăмах палăрнă. Ковалев наводчикпа пĕрле вăл туппа усă вырăна илсе тухнă та унпа тÿрĕ персе противникăн 2 блиндажне тата 2 пулеметнăй точкине çĕмĕрсе тăкнă.

Г. МАКСИМОВ.

Ленинград облаçĕн оккупациленĕ районĕсенче нимĕçсем тискер ĕçсем тăваççĕ

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, декабрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Совет войскисем тăракан вырăна фронт урлă каçса килнĕ хресченсем Ленинград облаçĕнчи оккупациленĕ хуласемпе ялсенче гитлеровецсем тискер ĕçсем туни çинчен каласа панă.

Псков хулинче нимĕç влаçĕсем 600 çынна Германие ĕçлеме яма тесе уйăрса илнĕ. Стариксемпе çамрăксене тата хĕрарăмсене (çав хĕрарăмсенчен нумайĕшĕ хăйсен çамрăк ачисене йăтса пынă пулнă) колоннăна пухса тăратнă та хуралласа пырса Баулино ялĕ патнелле хăваласа кайнă. Çав колонна кирпĕч завочĕсем валли тăм кăларакан вырăна çитсен, гитлеровецсем вăл çынсене пурне те персе вĕлернĕ.

Страшево ялĕ патĕнче нимĕç автомашини пăсăлнă пулнă. Гитлеровецсем, ку ĕçре вырăнти çынсем айăплă пуль тесе шутласа, çав ялти 50 киле çунтарса янă. Пушарта хресченсен мĕнпур пурлăхĕ çунса кайнă. Халĕ Страшево ялĕ пулнă вырăнта ишĕлчĕксем çеç сапаланса выртаççĕ.

Нимĕçсем çынсене халăх умĕнче хĕнессине яланхи йĕрке туса хунă. Пĕрре Василий Цыганов хресчен пĕр лав торф илсе пынă, вăл ăна расписанирен кăтартнинчен 15 минута каярах илсе пынă. Чуралла ĕç ĕçлесе халран кайнă çынна нимĕçсем халăх умĕнче шомполсемпе хĕненĕ те, çавăнтах торф илме шурлăха тепĕр хут янă.

Тыткăна лекнисем нимĕç войскисен çухатăвĕсем çинчен мĕн калаççĕ

ЦЕНТРАЛЬНАЙ ФРОНТ, декабрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Центральнăй фронтра тыткăна илнĕ гитлеровецсем нимĕç войскисем пысăк çухатусем тÿсни çинчен калаççĕ.

2-мĕш гренадерски полкри салтак Иоахим Гайзер çапла каласа панă:

— Эпир ротăна пырсан, унта мĕнпурĕ 25 çынччĕ. Смоленскра (унта пире çĕнĕ чаçсемпе хутăштарма ячĕç) пирĕн ротăри çынсен хисепне 100 çынна çитерчĕç. Эпир фронта килтĕмĕр те темиçе кунтанах пирĕн ротăра 20 çын çеç тăрса юлчĕ. Виçĕ кун каялла пире каллех çĕнĕрен 70 çын хушса пачĕç. Халĕ пирĕн ротăра виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ — австриецсем.

Çав полкри тепĕр салтак Иоганн Хабард çапла каласа панă: юлашки уйăхсенче пирĕн полка ултă хутчен çĕнĕ вăйсем — 500—600-шер салтак хушса пачĕç. Çав çынсенчен сурри австриецсем, вĕсене чи хăрушă задачисене пурнăçлама яраççĕ.

Ют çĕршывсенче

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ИТАЛИЕ ТАПĂННИ

Сывлăшран тапăннисен результачĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англи авиацийĕн пысăк вăйĕсем Генуяна тапăннă.

ЛОНДОН, декабрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Генуя, Неаполь тата Турин çине сывлăшран бомбăсем пыра-пыра пăрахнă хыççăн çав хуласенчен халь шутсăр нумай çын Рима тарма пуçланă. Çавна пула Генуяра продовольстви ĕçĕ питĕ начарланса, сивĕчленсе кайнă.

Сывлăшран бомбăсем пăрахнă пирки транспорт Италин çурçĕр енчи пайĕнче çеç мар, хĕвеланăç енчи пайĕнче те йĕркерен тухнă.

ÇУРÇĔР АФРИКĂРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Тунисра противник патне çĕнĕ вăйсем сахалтарах пыма тытăннă пулмалла. Инçе вĕçекен авиаци противник патне çĕнĕ вăйсем илсе пырас ĕçе ытла та хăрушă ĕç туса хурать.

Америка танкĕсем нимĕçсене вĕсем декабрĕн 7-мĕшĕнче Тебурдаран кăнтăралларахра тытса илнĕ позицисенчен каялла чакарнă. Союзниксен авиацийĕ хăйсен войскисене питех те вăйлăн пулăшса пынă. «Бостон» йышши бомбардировщиксем противника 50—100 фут çÿллĕшĕнчен атакăланă. Зенитнăй артиллери хаяррăн персе тăнă пулин те, çав бомбардировщиксем пĕр çухатусăрах каялла таврăннă. Фронтăн çав участокĕнче чи çĕнĕ йышши бомбардировщиксемпе тата истребительсемпе усă кураççĕ.

Рейтер агентстви çакна палăртса парать: ĕнер бронетанковăй вăйсене авиаци Тунисра вăрçма пуçланăранпа чи вăйлă пулăшу панă. Çапăçусем тĕттĕм пуличченех пынă.

Союзниксен çĕр çинчипе сывлăшри войскисен хисепĕ тăтăшах ÿссе пырать.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Çĕнĕ Гвинейăра союзниксем противникăн тепĕр хаяр контратакине сирсе янă. Противник пысăк çухату тÿссе каялла чакнă.

Декабрĕн 3-мĕшĕнче Америкăн пикировка тăвакан бомбардировщикĕсем, самолет-торпедоносецĕсем тата истребителĕсем Гвадалканартан хĕвеланăçнерехре Япони флочĕн пĕр 10 эсминецран тăракан отрядне атакăланă. Японин пĕр çар карапне путарнă. Виçĕ судно çинче пушар тухнă. Сывлăшри çапăçусенче противникăн 10 гидропланне персе ÿкернĕ.

США ÇАРĔ УСЕТ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Америка çарĕнче халь пĕр 5 миллион çын шутланать, вăл пĕлтĕрхи декабрьтинчен виçĕ хут ытларах пулать. Официальнăй даннăйсем тăрăх, çав хисепрен пĕр миллион çынна ялăн ютçĕршывсенче ĕнтĕ. 1943-мĕш çулта çара 7,5 миллион çынна çитерме шутлаççĕ.

БЕРЛИНРА РАБОЧИСЕМ ПОЛИЦИПЕ ТЫТĂÇСА ИЛНĔ

ЛОНДОН, декабрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Шанчăклă çынсем каланă тăрăх, Берлинăн пĕр районĕнче рабочисем полиципе тытăçса илнĕ. Тытăçăвăн сăлтавĕ — виçĕ рабочие гитлеровецсене хирĕç ĕçлеççĕ тесе айăпласа арестлени пулнă. Вĕсене арестленĕ пирки рабочисемпе работницăсем демонстрацисем тунă. Рабочисене арестленине хирĕçлесси пĕтĕм районĕпе сарăлнă. Юлашкинчен çав районa полици çавăрса илнĕ. Транспорт ĕçлеме чарăннă.

—o—

Пĕлтерÿ

Декабрĕн 11-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Парткабинетăн лекцисем вуламалли залĕнче (Чувашская ур., 6) Сталин юлташăн доклачĕсемпе приказĕсене вĕренекенсем валли лекци пулать.

Лекци теми:

«Гитлерла государствăна тата ăна ертсе пыракансене пĕтерсе тăкасси — пирĕн пĕрремĕш задача».

Лекцие ВКП(б) горкомĕн лекторĕ **Р. С. Давтян** юлташ вулать.

Билетсене Парткабинетра (Чувашская ур., 6) илмелле.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Фронтовиксен çырăвĕсем

1. ФРОНТĂН МАЛТИ ПОЗИЦИЙĔНЧЕ

Эпир, Чăваш республикинчи Вăрнар, Октябрьски тата Вăрмар районĕнчен килнĕ боецсем, фронтăн малти позицийĕнче «Чăваш Коммуни» хаçатăн ноябрĕн 5-мĕшĕнче тухнă номерне пĕрле пухăнса вуларăмăр. Унта Чăваш республики 25 çул хушшинче тунă çитĕнÿсем çинчен тĕплĕн çырнă. Пире тăван республикăри промышленноçпа ялхуçалăхĕ ÿссе чечекленни, чăваш халăхĕ отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче фронта пулăшас тĕлĕшпе ырми-канми ĕçлени савăнтарчĕ. Тăванăмăрсем, сирĕн тылри пархатарлă ĕçпе хавхаланса, эпир гитлерла государствăна, гитлеровецсен çарне тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе тăкассишĕн тата вăйлăнрах кĕрешме обязательствăсем илтĕмĕр, хамăрăн тăван çĕре фашистла ирсĕрсенчен хăвăртрах тасатма пултăмăр.

Фашистла çар Сталинград районĕнче, Центральнăй фронтра каялла чакать. Хĕрлĕ Çар ирсĕр тăшмана вăйлăн пыра-пыра çапать. Тăшмана тĕп тăвас сехет инçе юлмарĕ. Эсир, чăваш колхозникĕсемпе колхозницăсем, фронта пулăшассине татах та вăйлатăр. Çĕнтерÿ пирĕн алăра пулать—кун пирки эпир пĕр минутлăха та икĕленместпĕр.

Красноармеецсем — **М. И. БЫКОВ** (Вăрнар районĕнчен), **И. С. ТАБАКОВ** (Октябрьски районĕнчен), **И. ВИКТОРОВ** (Вăрмар районĕнчен).

2. ПĔЧĔК КЛАВДИ

Тупăсем кĕрслетнĕ сасă ял лешьенчи çăра хыçĕнелле куçрĕ. Ял темелли те çукчĕ ĕнтĕ эпир пырса кĕнĕ вырăна. Кĕлленнĕ çурт вырăнĕсем çеç хуралса тăратчĕç. Çунса пĕтеймен йывăççен турачĕсем кăмрăкланса хуралнă. Йăлăмри çырма кукăрĕнче кăна темĕнле хăватпа çич-сакăр çурт тăрса юлнă. Нимĕçсем вĕсене çунтарма ĕлкĕреймен курăнать.

Пирĕн редакци çав çуртсенчен пĕрне йышăнмаллаччĕ. Сыхланса çитрĕмĕр эпир çуртсем патне. Кунта асăрханмасăр çÿреме юрамасть. Урнă нимĕçсем хăйсем тарса кайнă чухне ăçта çитнĕ унта минăсем ларта-ларта хăвараççĕ. Пĕр кĕтсе тăман çĕртенех инкек пуласси пур.

Çуртсем пурте пушă. Ял çыннисенчен пĕр чун та çук. Кантăкĕсем çĕмĕрĕлсе пĕтмен çурт шыра-шыра пĕр пĕчĕк пÿрте пырса кĕтĕмĕр.

Каç çывхарса çитет. Вăхăчĕпе сивĕ тăман хĕвет.

Пăлтăрта тĕттĕм. Кĕсъе хунарне кăларса çутатрăм. Сасартăк пĕр кĕтесре çари!—çухăрса янă сасă илтĕнчĕ. Пĕчĕкçĕ хĕрача! Кĕтессе тултарнă улăм ăшне кĕрсе ларнă вăл. Те хăранипе, те ăшăнас тесе,—ăна-кăна пĕлместпĕр эпир. Хамăртан хăраса ан ÿктĕр тесе, ачапланă сасăпа хĕрхенсе йăпатма тытăнтăмăр. Хăйĕн тăван чĕлхипе калаçнине туйса илчĕ вăл. Ĕсĕкленĕн йĕрсе ячĕ те ура çине тăма хăтланчĕ. Пĕчĕкçĕ хулĕсенчен çĕклесе пÿрте йăтса кĕтĕмĕр. Пукан çине лартса типшĕм аллинчен тытасшăн пултăм эпĕ ăна. Пĕчĕк хĕр яхăнне те ямарĕ. Лампа çутсан тин лайăхрах уйăрса илтĕмĕр мĕскĕне. 5 çултан та иртмен вăл. Пĕчĕкçĕ çухе пичĕ çинче хĕрлĕ сăн тĕпренчĕкĕ те палăрмасть. Тутисем хăпаланса тухнă, пĕркелене-пĕркелене ашланнă. Хăраса шартах сикнĕ кăвак куçĕсем сÿнми çулăмпа йăлтăртатаççĕ. Пуçĕ çине çĕтĕлнĕ пĕчĕк одеял уртнă. Кивĕ сăкманпа пĕркеннĕ, çара уран.

Боецсем темĕн пек калаçтарасшăн пулчĕç ăна, сахăр парчĕç, çăкăр парчĕç. Çав япаласене темиçе хут тытасшăн пулсан та тытаймарĕ вăл. Шăнса кÿтнĕ аллисем ыратаççĕ пуль терĕмĕр эпир. Çапах та сĕннĕ çăкăра çăварне хыптартăмăр. Хĕпĕртенипе мĕскĕн хĕрача кăштах кулса илчĕ. Çăкăр чăмласа çăтнă май унăн куççулĕсем сăрхăнса тухрĕç.

— Мĕн ятлă эсĕ?—тесе ыйтрăмăр унтан.

— Клавди, — терĕ хĕрача.

Унăн сăмахне илтнипе калама çук хаваслантăмăр эпир.

— Аннÿ ăçта санăн?

— Пĕлместĕп.

— Миçе çулта эсĕ?

Хĕрача урăх чĕнмерĕ.

Кăштах тăрсан чей ĕçтертĕмĕр. Ларнă çĕртех çывăрса кайрĕ. Пăлтăртан улăм илсе кĕрсе кровать çине тирпейлĕн сартăмăр та плащ-палаткăпа витрĕмĕр. Йĕре-йĕре халĕнчен ÿкнĕ мĕн, лăпкăн çывăрса кайрĕ вăл çемçе вырăн çинче.

Сăкманĕ кĕсйинчен юнпа вараланнă хаçат татăкĕсем тупрăмăр. Пĕрин çинче хура карандашпа çакăн пек çырса хунăччĕ:

«Ку хĕр Клавди ятлă, 5 çулта. Амăшне ялти ытти халăхпа пĕрле нимĕçсем хуса кайнă. Ялта эпир унтан урăх никама та тупаймарăмăр».

Урăх нимĕн те çырман. Кам çырнă çак хут татăкне, пĕр-пĕр суранланнă боец-и, кам та пулин ялти çынсенчен пĕри-и, анчах пĕчĕк ялта та пĕртен-пĕр пĕчĕк Клавди çеç тăрса юлнине эпир хамăр та пĕлтĕмĕр ĕнтĕ.

Тăнлантăмăр пурсăмăр та. Пĕчĕк хаçат татăкĕ алран-алла куçса çÿрет.

...Иккĕмĕш çул акă фронтра. Курассине чылай курнă ĕнтĕ. Кирек мĕнле пулсан та нушаллă Клавдие пурсăмăр та эпир куççулĕмĕр тухиччен хĕрхентĕмĕр.

Боецсенчен пĕри врача чĕнтерчĕ. Хĕрача çывратчĕ пулин те, врач ăна пăхса тухрĕ те выçăхса шыçăннă вăл терĕ, аллисене тăм илнĕ.

— Мĕн шухăшлатăр ун пирки?—тесе ыйтрĕ манран врач.

— Хамăрпа пĕрле илсе каяр пулĕ.

— Çук, апла юрамасть. Çитес кунра темĕн те пуласси пур,—терĕ врач, — мĕн курни те ăна ытлашшипех. Ыран ирех медсанбат урлă хамăрăннисем енне ăсатăпăр.

Тинех эпир лăплантăмăр та хамăр ĕçе тытăнтăмăр. Тулта сĕм-тĕттĕм. Сăрт хыçĕнчи пăтранчăк пĕлĕт çинче юнланнă пек ялкăшать хĕрлĕ çулăм. Вăрçă шавĕ—инçетре. Нимĕçсене Хĕвеланăç еннелле хăваласа каяççĕ. Ыран эпир те çавăнталла каятпăр. Тĕп тăватпăр Клавдисемшĕн! Çитĕ акă тавăру сехечĕ!

Виçĕ симĕс ракета пĕлĕтe ялтăр çурса хăпарчĕ те инçете çитсе сухалчĕ. Туятăп, Пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла шуса пыраççĕ.

Капитан Н. ИЛЬБЕКОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Требуются финревизоры.

Оплата по соглашению. Обращаться к главному бухгалтеру тов. Давидсон, по адресу: г. Чебоксары, 2-я Герцена, дом № 32.

Чебоксарской телефонной станции требуются экономист и ученики-надсмотрщики (желательно девушки).

Обращаться по адресу: Чебоксары, дом связи, комната 24. Телефон № 0—74.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99 ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11272 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п.